# Николай ИШЕНТЕЙ сăввисем

*Списока Николай Ишентейĕн республикăра тухса тăракан хаҫат-журналта тата уйрăм кĕнекисенче тĕрлĕ вăхăтра ҫапăннă хайлавĕсене кĕртнĕ. Вулакан патне пуҫласа ҫитекеннисем те пур.*

**Автор ҫинчен**

Раҫҫей Федерацийĕн Писательсен союзĕн членĕ, ачасен те, ҫитĕннисен те юратнă ҫыравҫи Николай Ишентей 1953 ҫулхи нарăсăн 14-мĕшĕнче Ҫĕрпӳ районĕнчи Тури Шурҫырма ялĕнче ҫуралнă. Шкулта, Чăваш патшалăх ялхуҫалăх институтĕнче пĕлӳ пухнă, ҫарта пулнă. Салтак тивĕҫне татсан ял хуҫалăх производствинче вăй хунă. Ҫав вăхăтрах И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ.

Пурнăҫăн тĕрлĕ авăкĕнче хăйне тĕрлĕ ĕҫре тĕрĕсленĕ, вăй питти вăхăтăн вун ҫичĕ ҫулне вĕрентӳ ĕҫне панă. Ҫав тапхăртах вăл пултарулăх ĕҫĕнче те чылай ҫитĕнӳ тунă. Ачасемпе ҫамрăксем валли ҫырнă кĕнеке ал ҫырăвĕсен республикăри конкурсĕн ҫĕнтерӳҫи (2015, 2016), Ҫеҫпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ (2004), Чăваш Республикин культурăн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ (2013).

Н. Ишентей 20 ытла кĕнеке авторĕ, унăн хайлавĕсем республикăра ирттерекен «Ҫулталăк кĕнеки» конкурсра тăватă хутчен ҫĕнтернĕ. Вĕсене алла илсен вуласа тухмасăр чарăнаймастăн.

**Эпĕ пĕчĕкҫĕ чăваш**

Эпĕ шăпчăк чĕппи мар,
Эпĕ пĕчĕкҫĕ чăваш.
Кам хăюллă та хастар,
Ҫавă пулĕ ман юлташ.

Атăл вăйĕ – тумламра,
Чăваш пурнăҫĕ – манра.
Чул ватса кам ҫул хывасшăн
Ҫавă тĕслĕх пулĕ маншăн.

Эпĕ пĕчĕкҫĕ чăваш.
Пур ман ҫулăмлă малаш:
Каялла пĕр шит чакмасăр
Ăслă чăваша тухасшăн.

**Утма вĕренни**

Карчăк утать туяпа,
Мăнук – тăват урапа.
Пĕри кăштăр-кăштăртик,
Тепри тăпăр-тăпăртик.

Асламăшĕ ăс парать:

«Утя, утя тумалла».
Мăнукĕ çунатланать:
«Утса-сиксе чупмалла».

Ватти калать: «Тыт манран,
Ыран хама çавăтан».
Ачи калать: «Эп хамах!»–
Утăмлать тытмасăрах.

Пĕри утать туяпа,
Тепри – çăмăл урапа.
Пĕчченшерĕн – кăштăртик,
Иккĕн пĕрле – тăпăртик.

**Ташша вĕрентни**

Çулталăкри шăллăма
Эп вĕрентрĕм ташлама.
– Ура çине тăмалла,
Тăпăрт-тăпăрт тумалла.
Тепĕр пусăм тăвăпăр,
Пăрчăкан пек ташлăпăр.

**Ăмăрту**

Петюк урамра çӳрет,
Вăл хăех утма пĕлет.
Çерçи юнашар çӳрет,
Петюкран инçе сикет.

Арçын ача тĕлĕнет,
Тупăшмалла сиккелет.
Çерçи пĕчĕкçеç, анчах
Сикет унран хытăрах.

– Чемпион эс, Чим Çерçи!
Вир сапатăп, тусăм, çи.

**Пăтă çини**

Сĕтел çинче турилкке.
Çуллă пăтă илĕртет.
Çиме тăрсан инкеке
Апапап тет, пĕçертет.

Апап тĕлне пуличчен
Халап çапса илер-и,
Анчăк тусăмпа пĕрле
Куян тытса килер-и;

Йытă çури хам-хам тет,
Лайăх ача ням-ням тет.
Йытă валли шăмă пур,
Пире валли пăтă пур.

**Кĕтери мĕншĕн хитре;**

Пирĕн ялти Кĕтери
Пуринчен те чиперри.
Мĕншĕнне пĕлетĕр-и;
Ун сăн-питне çав тери
Илем кӳрет куктĕрри.

**Йытăпа кушак**

Йытăпа кушак ялан
Харкашаççĕ пустуйран.
Пĕрне шăмă хурса патăм:
– Кукăр хӳре, ан чăкраш!
Тепĕрне сĕт ярса патăм:
– Мăрмăр тус, ан кутăнлаш!
Туслăха хакламасан
Ыр кураймăр нихăçан.

**Улмуççипе Мявук йывăççи**

Пирĕн садра йывăç пур.
Лапсăрккаскер – ай тур-тур! –
Улма тунă йăтайми,
Симĕс çулçă палăрми,
Яру янă ярапи.
Ун ятне пĕлет пур çын –
Ку вăл улма йывăççи.

Тепĕр йывăç – урамра.
Ун çинче кушак ларать
Кампуркка хамлатнăран.
– Мявук, – тетĕп, – халех ан!
Çук анмасть чипер куштан.
Йывăç ятне пĕлтĕр-и –
Ку вăл Мявук йывăççи.

**Ытарайми шăллăм**

Пирĕн килте атте пур,
Пуринчен те вăйлăскер.

Кил илемĕ – анне пур,
Ăшшăн ачашлаканскер.

Тата шăллăм пур – куштан.
Пурпĕрех ачи аван.
Пуç çине ларин хăш чух
Кӳренмешкĕн майĕ çук:

Лайăх мультик пуçăнсан
Ытарайми шăпăрлан
Шăпăрттин те шарламасть.
Вулама чăрмантармасть.

**Чуччу ярăнни**

– Чу-чу! Чу-чу!
Чуччу кашти хурама,
Пурте тухăр урама.
Чуччу кашти авăнсан
Ярăнма тата аван.

– Чу-чу! Чу-чу!
Анне – ачаш тăвакан,
Атте – чуччу тăвакан.
Ан шикленĕр ярăнма –
Хуçăлас çук хурама.

**Эпĕ мĕнле хĕрача**

Шухăшлатăп кун каçа:
Эпĕ мĕнле хĕрача;
Пĕрре урай çăватăп та,
Тепре урок тăватăп.
Атте-анне ĕç хушасса
Пĕртте шанса лармастăп.

Шухăшлатăп кун каçа:
Эпĕ мĕнле хĕрача;
Анне шухă ан пул тет те,
Атте чыслă пурăн тет.
Хитре кĕпе пĕрре кăна –
Епле вăййа тухмалла;

Шухăшлатăп кун каçа:
Эпĕ мĕнле хĕрача;
Вăр-вăр çĕвĕ машинипе
Хите кĕпе çĕлетĕп.
Ялан ырра шанатăп та
Хам пĕлнĕ пек пурнатăп.

Шухăшлатăп кун каҫа:
Эпĕ мĕнле хĕрача;
Пĕрре чĕрне сăрлатăп та,
Тепре кĕпе суйлатăп.
Тĕкĕр ҫине пăха-пăха
Дискотека каятăп.

**Кун йĕркине пăхăнар**

Ҫемьере эпир тăваттăн
Ҫирĕп йĕркепе пурнатпăр:
Ирсерен стройпа утатпăр,
Физзарядкăна тухатпăр.
Чупса, сиксе, выляса
Мускула карăнтаратпăр.

Атте – кĕреш юман пек,
Пăт пуканне ывăтать.
Анне – ешĕл ҫăка пек,
Енчен-енне авăнать.
Эп те шăллăмпа пĕрле
Сикелетпĕр мечĕкле.

Ҫирĕп сывлăха кура
Кăмăл ҫаврăнать ырра.
Кун йĕркине пăхăнатпăр,
Сывă пурнăҫпа пурнатпăр.

**Юрататăп шăллăма**

Юрататăп шăллăма,
Шанчăк парать вăл мана:
/ссен салтак пуласшăн,
Раҫҫей ҫĕрне сыхласшăн.
Тетте автомат ун пур –
Салтакла утать маттур.

Анчах эпĕ хальлĕхе
Хам сыхлатăп-ха хăйне
Ытлашши алхасасран,
Чупнă чух такăнасран.
Йĕнĕ чух та йăпататăп,
Садике леҫсе яратăп.

**Кранпа паллашни**

Патвар ашшĕ ывăлне
Хулпуҫҫи ҫине лартсан

Петюк хаклă теттине
Вĕçертмерĕ алăран

Аслă урам вĕçĕнче те
Улăп кĕлетке çĕкленчĕ.
Петюк ыйтать: «Кам унта
Теттелле вылять тата;»

– Кран вăл, – ашшĕ хуравлать,–
Кирпĕч купипе вылять.
Кайран çав «теттесенчен»
Хăпартать чăн-чăн кермен.

**Пулас чемпионсем**

– Çĕнĕ юр çăвать паян.
Йĕлтĕр тăхăнар, Иван,–
Тетĕп эп. – Ăмăртмалла
Ярăнар чемпионла!

Асанне чарать: – Сыхланăр
Чир амакĕ тивесрен.
Харăссăн хурав паратпăр:
– Шикленмест чиртен спортсмен!

– Чим, сиенлĕ вирус пур-иç –
Уйрăлмасть-ха асанне.
– Хускану вăл – сывă пурнăç.
Тивеймест спортсменсене!

**Питрен сивĕ чĕпĕтмест**

– Сивĕ чĕпĕтет питрен, –
Пăшăлккă çӳрет Çемен.
Хăй çӳрет лĕпсĕртетсе,
Вăрăм кĕрĕк пĕркенсе.

– Мана сивĕ чĕпĕтмест!
Хăваласа çитеймест.
Йĕлтĕрпе эп ярăнатăп,
Уй-уй урлă ыткăнатăп.

**Уява хатĕрленни**

Хитре теттесем çакатпăр,
Чăрăша капăрлататпăр.
Сăвă каласан пушшех
Пирĕн елка хитререх.

Алла-аллăн тытăнатпăр,
Çепĕç юрăсем юрлатпăр.
Ташă ташласан пушшех
Ешĕл чăрăш хитререх.

**Мĕн юратать Хĕл мучи;**

Ачасем, пĕлетĕр-и,
Мĕн юратать Хĕл мучи;
Юратать сивĕ хĕле,
Шартлама сивве, çиле...
Тата ăшă кăмăллă,
Ырă, çутă ĕмĕтлĕ,
Çĕнĕ çул ачисене.

**Мулкачпа Юр кĕлетке**

Юр кĕлетке çур енне
Усрĕ хĕрлĕ сăмсине.
– Ан кулян! – калать Мулкач, –
Кишĕрĕ сая каймасть.

Юр кĕлетке хурланмарĕ –
Шăнкăр шыв пулса юрларĕ.

**Виçĕ çавра – чăваш ачи тавра**

1

Ман атте – ăста платник.
Пуртăпа чăштик-чăштик
Каскалать, турпас вĕçет,
Çĕнĕ çурт пури ÿсет.

Тытрăм мăлатук алла,
Шак шаккатăп унпала.
Аври – çирĕп вĕрене,
Шеп туптанă тимĕрне.

Шак! Шак! Урăх сăмах çук
Мăлатук алăра чух.
Мĕн ахаль сас тумалла –
Хÿмене юсамалла.

Пĕрре çапрăм, иккĕ çапрăм...
Тайлăк юпана тăратрăм.
Калинкке те кăмăллă,
Уçăлать çăп-çăмăллăн.

Тăрăшса ĕçленĕ май

Пӳрнене лектертĕм – ай!
Макăрмашкăн шутламарăм,
Татăклăн хама каларăм:

Çирĕп пул, чăваш ачи,
Эпĕ – аптрман йышши.

2

Ман анне – уй-хир ăсти,
Агроном, çĕр асамçи.
Çĕр чĕлхине ăнкарать,
Пахча çимĕç ăнтарать,

Эп те ĕç патне пыратăп.
Кĕреçепе çĕр пусатăп,
Кĕреплепе якататăп,
Кăпăшка йăран тăватăп.

Çĕнĕ сортлă вăрлăха
Пĕрчĕшерĕн акрăм та,
Шăварма каç пулттипе
Шыв çĕклерĕм витрепе.

Çĕр чĕлхи вĕреннĕрен
Тĕслĕх илтĕм аннерен:
Кăшăллă витре тулли
Шыв тултартăм хам валли.

Ыр çын ĕçрен хăрас çук
Усăллă ĕç тунă чух.
Тайăлмасăр шыв йăтатăп,
Татăклăн хама калатăп:

Чăт, юлташ, ан турткалаш,
Çĕр ырри санра, чăваш.

**3**

,ç вĕçленчĕ  те канма
Тухрăм эпĕ урама.
Пур-ха ман велосипед,
Катаччи чупас килет.

Мĕн пулать-килет – ларатăп,
Педале çавăрттаратăп.
Хăлхара çил шăхăрать,
Çухрăм хыçала юлать.

Лупашка пӳлет çула.

Чарăнтăм – мĕн тумалла;
Çавăрттаркăч кустăрмин
Çĕмĕрĕлнĕ шăлтăрми.

Уçă тытрăм, пăркалатăп,
Педале вырнаçтаратăп.
Лакăма йăлт тикĕслерĕм,
Велодром пек пултăр терĕм.

Ĕç çĕклет – çула чĕнет.
Ыткăнать велосипед.
Хăрамасăр ярăнатăп,
Татăклăн хама калатăп:

Пул малта, çилпе тавлаш –
Чăваша кĕтет малаш.

**Кушак**

Те кăçатă, те пушмак
Тăхăннă ула кушак.
Сивĕрен те хăрамасть,
Сунара каять – шăнмасть.

**Пыл хурчĕсен саламĕ**

Утарта. Ирех тăратпăр,
Ешĕл çарана тухатпăр:
– Сывă-и, пылак картиш!
Ку эпир – хĕвеллĕ йыш!

Яланах ĕçпе çӳретпĕр,
Вăрмана вĕçсе кĕретпĕр:
– Çӳллĕ йывăçсем, аван-и!
Ку эпир – вăрман тăванĕ!

Пыллă ĕшнене сыхлатпăр,
Утаман çулне картлатпăр.
– Чыс-мухтав, ыр сунана!
Кил кунта, ирхи хăна!

**Хуралта**

– Алăк хыçĕнче кам пур; –
Хамлатсах вĕрет Кампур. –
Çывăха ан кил, такам!
Е çыртса илетĕп хам!

Вăрăм майлă тăрпалтай

Шарт сикмерĕ. Ай-яй-яй!
Хӳме урлă кармашать,
Ашкăнать, пуçтахланать.

– Хӳререн ан турт, хурах!
... Хурах мар-иç ку – Жираф!

**Ĕне**

Утă купи патĕнче,
Картишĕнче – ай тĕнче! –
Тăра парать пĕр пичке.
Сенĕк пур пуçĕ çинче.

Пысăк енчĕк сĕтĕрет.
Унта мĕн-ши – кам пĕлет;
– Тавтапуç сана, Панеç.
Енчĕк тулли кучченеç!

Кам часрах ӳсесшĕн –
Килĕр сĕт ĕçмешкĕн!
Çу, хăйма е чăкăт
Астивме те вăхăт!

**Чĕпсем**

Кăлăк чăх кăтик-кăтик
Вĕçсе анчĕ те вăштик
Сырса илчĕç чĕпписем –
Шип-шип-шип чăмаккасем.

Чĕпĕ теме вĕсене
Шăмсăр чĕлхе çаврăнмĕ:
Тухнă тейĕн картишне
Сарă чечек ярăмĕ.

**Мулкач çурисен юрри**

Эпир мулкач çурисем,
Măш-măшарик çăмхасем.
Йышпа пĕрле савăнма
Килĕр пирĕн ушкăна.
Вăйă карти – вăрманта,
Ташă çемми – çаранта.
Пиртен чипер чĕрчун çук –
Хăлха тăршшĕ ик вершук.

Эпир мулкач çурисем,

Сикки-прикки теттесем.
Пирĕнпе выляс тесен
Килĕр вăйă картине:
Вăрăм хăлха вăрманта,
Кĕске хӳре çаранта.
Выляс килсен хуса çит –
Хӳре тăршшĕ чĕрĕк шит.

**Çумăр хыççăн**

– Пĕлетĕр-и, ачасем,
Мĕншĕн чечек çеçкисем
Тĕрлĕ тĕслĕ; – тет Алюш.
– Мĕншĕн; – тĕлĕнет вĕт-шакăр,
Çĕннине пĕлесшĕн, ахăр.
– Эп пĕлетĕп, – тет Валюш.–
Сар хĕвел пин-пин алпа
Сăрлать пин-пин сăрăпа...

– Çук, – касса татать Алюш, –
Ав, чечеклĕ алшăлли
Тӳпере куратăр-и; –
– Асамат вăл, – тет Валюш.
– Çумăр хыççăн асамат
Чечексен питне шăлать.
Çупăрлать те ачашлать –
Тĕслĕ сăрă çыпçăнать.

**Чечексем**
Ташă сăвви

*Пĕр сасăпа (хавассăн).*

Эпĕ чечек,
Ешĕл чечек –
Улăх варринчи таса илем.
Ай, ӳсетĕп,
Ешеретĕп
Çулçă çумне çулçă хушнăçем.

*Икĕ сасăпа (алла-алăн çавтăнса).*

Эс те чечек,
Эп те чечек –
Сар хĕвел ытамĕнчи хĕлхем.
Ай, юрлатпăр,
Ай, ташлатпăр
Çаврăм хыççăн çаврăм тунăçем.

*Нумай сасăпа (карталанса)*

Тĕрлĕ чечек,
Пин-пин чечек –
Аслă тĕнчери таса илем.
Пурăнатпăр,
Савăнатпăр
Çеçке çумне çеçке хушнăçем.

**Çил ачи**

«Садик»,– терĕ те кондуктор,
Тухрăмăр автобусран.
Çил ачин белечĕ çук-тăр–
Çитнĕ садике çуран,
Çитнĕ пирĕнтен малтан.

**Ырă ĕçшĕн хатĕр пул**

Садик умĕ. Такăр çул.
Ачасем килеççĕ.
– Аслă ушкăн, тимлĕ пул,
Пирĕн çул илемсĕр.

– Атьăр-ха, йăран тăвар.
– Чечексем лартар-и...
Кар тăрса мухтавлă çар
Çĕр чавма пуçларĕ.

Садик умĕ. Такăр çул.
Ик енче те – лили.
– Ырă ĕçшĕн хатĕр пул! –
Ку вăл пурнăç пилĕ.

**Çырлара**

Кайрăмăр пĕр ирхине
Йăмăкпа вăрман хĕрне.
Эп çырла татмассерен
Сас парать куккук çӳлтен.

Ĕнтĕ вунă çырла татрăм.
Татрăм та кăштах тăхтарăм.
Ав, куккук шав куккуклать,
Çирĕм таранччен шутлать.

– Эй, куккук! Мана çитет.
Йăмăк хыçалтан килет.

Тепĕр вунă çĕр çырли –
Пĕчĕк йăмăкăм валли.

**Салтак пулатăп эпĕ çитĕнсен**

Салтак пичче çыру çырать çартан:
– Çĕршыв çине пăхатпăр уçлăхран.
Тĕнче чĕрĕлĕхне куллен сыхлатпăр,
Халь спутник урлă çыхăну тытатпăр.

Салтак пулатăп эп те çитĕнсен.
Тĕллевĕм çирĕпленчĕ кунсерен.
Салтак чĕри планетăпа пĕр тан!
Тăнăçлăха упрать вăл уçлăхран.

Юлас килмест ман аслă пиччерен –
Çĕршывăма сыхлатăп çитĕнсен.

**Эп ыран шкула каятăп**

Эп ыран шкула каятăп,
Çавăнпа килти ĕçе
Шăллăма шанса паратăп,
Ан çухаттăр тивĕçе.

– Анчăк хӳри авкаланчăк.
Тӳрлетме ан хăй – çыртать.
Мăрăлкка ытла йăпанчăк.
Çирĕп тыт – наянланать.

**Пĕрле лайăхрах**

Чăваш, вырăс, акăлчан –
Виç чĕлхе ăша хывсан
Аслă тĕнче çывăхрах.
Пире пĕрле лайăхрах.

Виçĕ чĕлхе – виçĕ ăс.
Виç хут нумай савăнăç.
Ян кайсан тăван сăмах
Пирĕн кăмăл ăшăрах.

**Светофор**

Шкул умĕнчи урам кĕтесĕ.
Васкаççĕ пурте ирхине.
Çапах та çул парса кĕтеççĕ
Машинăсем ачасене.

Куç хĕсрĕ светофор хунарĕ
Çитĕнекен ăру енне,
Электроăс – çул-йĕр хуралĕ –
Аван пĕлсе тăвать ĕçне.

**Пуç ватмăш**

Пăруран ыйтать Раман:
– Кам эс; Ăçтан таврăнан;
– Му-ук! Мукка! Амукка! –
Хирĕç сас парать Мукка.

Раман кăн-кан пăхкалать,
Пÿрне хутлатса шутлать:
– Урамра пур пĕр Мукка.
Ăçта Мукпа Амукка;

.

**Шут вăййи**

– Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă,–
Çулçă ÿкнине шутлатăп.
Хăмăрри, хĕрли, сарри,
Тĕмпĕл-тĕмпĕл чăпарри...
Йăлт çаралчĕ сад пахчи.
Юлчĕ темиçе çерçи.

– Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă,–
Çулçă ÿкнине шутлатăп.
Шуранки, шурри, шурри,
Мамăк евĕр чăлт шурри...
Çулçă мар-иç – тÿперен
Юр пĕрчи ÿкет иккен.

**Сăрт патшилле выляни**

Тухрăмăр тăвайккине
Сăрт патши пулмашкăн.
Тĕрткелетпĕр пĕр-пĕрне
Чи çÿле тăрасшăн.

Мăкăль тупрĕ Йăкăнат,
Алли чĕрĕк Ирăн.
Орден евĕр ялтăрать
Кăвакартнă вырăн.

Эп те тивĕç медале –
/крĕм, чикелентĕм.
Аслă ĕмĕт тÿпемне

Чи вайли ҫӗклентӗр.

**Вӑйӑ илемӗ**

Ешӗл чӑрӑш кӑмӑлне
Тӑрар вӑйӑ картине,
Ҫӗнӗ ҫул ачисем,
Пуринчен маттуррисем!

Кӗтнӗ хӑна – Хӗл мучи
Ҫӗн ӗмӗте ҫитерет.
Ай, мучи, чун уҫҫи,
Тулли парнепе килет.

Чипер аппа – Юр пике
Юр пӗрчи пек вӗлкӗшет.
Ай, пике, Юр пике,
Кил илемне сӑн кӗртет.

**Вӑрманти елка**

Ҫӗн ҫул каҫӗ ӗшнере
Пӗчӗк ҫеҫ мулкач йӗрет:
Ёлка тупрӑм,– тет, – анчах
Теттесем ҫук-иҫ пачах.

Ушкӑн уйӑп пычӗ ларчӗ –
Йӑрӑс чӑрӑш капӑрланчӗ.
Савӑнать мулкач ҫури,
Янратать уяв юрри.

**Лантӑш**

– Шӑнкӑрав пек шурӑ лантӑш
Татрӑм,– терӗ манӑн тантӑш.
Сулкаларӗ вӑл ӑна, –
Янӑраттӑр вӑрмана!

Эп те лантӑша тӑнларӑм:
Шӑнкӑравӗ шарламарӗ.
Ӳкрӗ кӗмӗл пек тумла –
Сассӑр йӗчӗ пулмалла.

**Шӑпчӑк шӳтлевӗ**

Петюк аннӑ ҫырмана,
Пӗчӗк пӗве пӗвелет.
Ачана сӑна-сӑна

Шăпчăк юрă кĕвĕлет:

– Иртнĕ çул юрлаттăмччĕ:
Петюк, Петюк – йăпăлчăк.
Халь çĕн юрă çырăнчĕ:
Петюк пичĕ лапăрчăк.

**«Тирпейлĕ сысна»**

– Эп – Нăрх-нăрх. Эп Мăр-мăр мар.
Мăр-мăр пек тирпейсĕр мар,–
Кушака ятлать сысна. –
Тяппупа шăлан куçна.
Çăвăнма та ӳркенен.
Намăс – хăнасем килсен.

Хăй мунча кĕрет ара
Пылчăклă лупашкара.

**Яка хӳре**

– Тилĕ, Тилĕ, çав тери
Чее теççĕ сан пирки;

– Чее мар эп – чиперкке,
Пурçăн пек яка хӳре!
Ахăртнех, чее тесе
Калаççĕ пуль кĕвĕçсе,
Хир чăххине хĕрхенсе.

– Тилĕ, Тилĕ, çав тери
Яка теççĕ сан пирки;
Хӳрене мĕнле туратăн;

– Куçкĕски умне тăратăп,
Турахуп тытса шăртлатăп.
Çавăнпа та ман хӳре
Яп-яка та хип-хитре.

**Кăвакал**

Пĕр кăвакал нартлатса,
Тайăлса, лăпăстатса,
Енчен-енне сулланса
Анаталла васкарĕ.

– Ăçта каян кăвакал;
– Чĕп хуралне каятăп.
Пĕчĕккĕ-çке ачамсем,

Хăрушлăхра айвансем –
Явăнать унта çăхан.
Хăвăртрах çитесчĕ ман.

Тайкаланчăк кăвакал
Шыв хĕррине çитрĕ те –
Паллама та çук ăна:
Çил кĕввипе çаврăнать,
Хум ташшипе ярăнать.

Кăвакал – балет ăсти,
Уксах мар çак лăпăсти.

**Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт**

Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт.
Унран ĕçченни кам пур;
Хăнана пыма чĕнет,
Тутлă пыл çитерĕп тет.

Тăшман пырсан – шел ăна.
Ĕлкĕрĕ-ши пытанма;..

**Ау**

Çӳретĕп вăрманта пĕччен,
Кăмпа шыратăп нумайччен.
Чĕнетĕп эп:
– Кăмпа, ау!
Ян кайрĕ сас:
– Кунта!.. Ау!..

– Ау! Кам эс; Мĕнле яту!
– Ку эпĕ – Вăрманти Ау!..
– Ау! Кăмпа пур-и; – тĕпчетĕп.
– Кунта пĕри, – хурав илтетĕп.

Çапла Ау пулăшнипе
Тулли тултартăм пĕрнене.
– Киле каятпăр-и, Ау;
– Аюк! Вăрман – чи хăтлă çурт.

**Вăйă**

– Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă!.. –
Эпĕ салтакла утаттăм.
Халь выляр пытанмалла , –
Тет хĕвел кула-кула.

Пĕлĕт шурă шерепеллĕ –
Пытанма ытла та меллĕ.
Пĕрпĕр эп хĕвелĕнне
Асăрхарăм çĕлĕкне.

– Куртăм, куртăм! – тетĕп. – Халĕ
Эсĕ тух! – Вăл пур, çухалчĕ.
Ах, ытла та-çке чее,
Хам пытанăп хальхинче.

– Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă... –
Хĕвелпе шăпа яратпăр.
– Манăн пытанма тивет, –
Ăшшăн вăл кулса илет.

**Уйăппа уйăх**

Хĕлле. Чăрăш тăррине
Улăхнă çут уйăх.
Юнашар турат çине
Пычĕ ларчĕ уйăп.

Саламлаççĕ пĕр-пĕрне
Уйăппа çут уйăх.
Мĕн çывхартнă вĕсене –
Савăнăç е хуйхă;

**Сывлăх команди**

Икĕ ача урама
Тухнă пĕрле выляма.
 – Тĕлĕнмелле сас-хура
Çӳрет пирĕн таврара,–
Шăппăн пĕлтерет пĕри.
 – Мĕн çĕнни; – ыйтать тепри.
 – Улăп чĕрĕлнĕ!
 – Хăçан;
 – Хăçанне пĕлен кайран!
 – ,ненместĕп.
 – Ан ĕнен.
 – Тен, шӳтлетĕн;
 – Хăв пĕлен.
 – Хăрах куçпа куртăн-им;
 – Çук-ха, хыпар илтрĕм тин:
Ютра мар тет – Раççейрех,
Кăмăллă Чăваш Енрех –
Пирĕн пек ачасемех
Кĕнĕ «Сывлăх» ушкăнне...
Ăмсанатăп вĕсене.

– Вăт хыпар ку! «Сывлăха»
Пирĕн те çырăнмалла.
– Çитмелле çав спорт клубне,
– Пĕрле шырар адресне.
– Хулара-и;
– Хулара.
– Районта-и;
– Районта.
– Тен, Интернет систерет;
– Каламасан кам пĕлет;

Никам кĕтмен самантра
Çитет виççĕмĕш ача:
– Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă –
Сывлăх çулĕпе чупатăп.
Кам зарядкăна тухать –
Улăп мускулне тупать.

– Ай-уй! сывлăхлă ача
Хамăр кӳршĕрех пурнать.
– Унпа юнашар тăма
Пире кам чăрмантарать!;

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Пурте хускану тăватпăр.
Кам зарядкăна тухать,
Çавă сывлăхлă пулать.

**Ӳсĕм картлашки**

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Шкул картишĕнче тăратпăр
Шăпăрттин-шăп самантра
Пĕтĕм шкул – линейкăра.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Картлашка пулса тăратпăр.
Ӳсĕм çулĕ çавнашкал:
Кашни класс – пĕр картлашка.

Чи малта – пĕрремĕшсем,
Пуринчен пĕчĕккисем.
Пурпĕр пирĕн класăн
Кăмăлĕ хавaслă.

Эпĕр килнĕ ăс пухма,
Садик хыççăн килнĕ.
«Пиллĕк» паллă тултарма

Сумкăсем те илнĕ.

Иккĕмĕш класс ачисем
Пирĕнтен кăшт çўллĕ,
Юнашар виççĕмĕшсем
Çўллĕрех ўт-пўллĕ.

Унтан вара ыттисем
Картлашка хываççĕ.
Вăрăм рет вĕçĕнчисем
Чи çўлте тăраççĕ.

Вун пĕрмĕш класс ачисем
Сумлăн курнаççĕ,
Ма тесен вĕсем кăçал
Вĕренсе тухаççĕ.

Шкулта тимлĕн ăс пухсан
Пирĕн йыш та юлмĕ –
Картлашкапа улăхсан
Пулăпăр-ха сумлă.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Шкул картишĕнче тăратпăр.
Шăнкăрав ян янăрать,
Урока йыхрав парать.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Пурте пĕр ретпе утатпăр.
Пысăк йыш класа кĕрет,
Тепĕр картлашка ўсет.

**Ăçта-ши çуркунне;**

– Çуркунне! Çуркунне! –
Ташша ярать Марине.
Савăннă хăй тем пекех –
Хăна кĕтет пулинех.

Эпĕ те ун-кун пăхатăп.
Чечек тухнине куратăп.
Ешĕл сăрт, хитре ĕшне...
Ăçта хăна – çуркунне;

**Чечек**

Ӳкереттĕм хут çине
Пĕр чечек, чи хитрине.
Симĕс тĕспеле йĕрлеттĕм –

Ешĕл çулçă пултăр теттĕм.
Кĕчĕ уçă кантăкран
Пĕр пыл хурчĕ ăнсăртран.
Тĕлĕнет: «Ку мăкăнь-ши;
Сиплĕ пыллă клевер-ши;»

**Хăнара**

– Хăна пул, тăванăм,– тет шĕшкĕ хăртни.
Ун пĕчĕк хуран пур – ай, тутлă пăтти!
Хуçассăм килмерĕ вăрман кăмăлне,
Ывçа илес терĕм сар-сар мăйăрне.
Анчах та пакша ĕлкĕрет маларах.
Татать мăйăра – пытанать самантрах.
– Кĕлентĕр хӳре, ашкăнма чарăнар!
Эпир хăнара-çке – сăпайлă пулар.

**Куян мĕншĕн пытаннă;**

Кишĕр тупнă пĕр куян,
Çавăнпа та вăл пуян.
Йыхрав янă таврана:
– Пурте килĕр хăнана.

Кашкăр, Упа Утаман,
Тилĕ, çăткăн Арăслан –
Пурте килнĕ хăнана.
Курăнман куян кăна.

**Хĕллехи çулçă**

Никам та çук çăка çинче,
Анчах такам ун вăррине
Васкавлăн пухнă, шĕкĕлченĕ –
Çӳпленĕ юр çивиттине.

Сар çулçă çеç çăка çинче
Вĕл-вĕл вĕçет кăштах шикленнĕн.
Чим, çулçă мар ку – кăсăя.
Пур çимĕçе ямасть сая.

**Уйăп**

– Тусăмсемĕр, уйăпа паллатăр-и;
Ав, палан çинче ларать. Куратăр-и;
Тăккаланă çинĕ чух çырлисене –
Хĕп-хĕрлех хĕретнĕ хăй пĕсехине;

**Вăкăр**

Майраки ун – каçăр уйăх.
Мĕкĕрсе анать туран.
Ай! Тĕксессĕн пулĕ хуйăх –
Пăрăнса иртер унран.

**Йытă**

– Хам-хам! Хам-хам! – тет пĕр йытă!
Шанчăклă юлташĕ çыннăн:
Ырă хуçа кăмăлне
Хураллать ун кил-çуртне.

Тĕрлĕ путсĕр, усал вăй,
Ун пата килме ан хăй!
Хуралта вăл çывăрмасть,
Никама та каçармасть.

Кӳлĕнсен хурал ĕçне
Шăна вĕçсе иртес çук,
Хуçа кăмăллă чухне
Хырăм выçă юлас çук.

**Чăх чĕппи**

Эпĕ – пĕчĕкçĕ çăмха,
Сарă-сарă чăх чĕппи,
Мамăк евĕр чăх чĕппи.
Çаран тăрăх сиккелетĕп,
Шиппи-шиппи шиплететĕп,
Чечекпе пĕрлех ӳсетĕп.
Тĕлĕнеççĕ ачасем:
– Курăр-ха – çаран çинче
Сас параççĕ чечексем.

**Мулкач**

– Эй, мулкач!
Манпа калаç.
Мĕншĕн санран тăрăхлаççĕ,
Чалăшкуç тесе калаççĕ;
– Пулин. Эпĕ чалăш мар,
Никамран та кая мар.
Куçăм та аван курать,
Асăрхать инçетрине,
Кайрине те малтине.
– Каçарсам мана, мулкач
Тăрăхлама сăлтав çук,
Эс хăюллă Вичкĕн Куç!

**Улатакка**

Шак! шаккать Улатакка
Куллен йывăç хăвăлне.
Мăлатукпа шаккаса
Тен, кĕресшĕн йăвине...
Анчах темшĕн хăй çумне
Вăл илмен çăраççине;

**Автан**

Чăхсен патши пур – автан!
Эсир ăна курнă-и;
Шуçăм карăнса тухсан
Сас парать: «Вăрантăр-и;»

Сар чăхсем çав патшана
Юратаççĕ пулмалла.
Кăтик-кăтик юрласа
Кускалаççĕ тавралла.

**Хăва кăчки**

Кам шиклĕ – шикленнĕ,
Çав кĕрĕк пĕркеннĕ.
Мĕн пулнă-ши терĕм;
Е мамăк-ши терĕм;
Минтер пек темскер.
Калас-и мĕскер;

Сив çил тустарсан та,
Тăман лăскасан та
Пачах та шикленмĕ
Çурхи кун çемçи –
Ăш кĕрĕк пĕркеннĕ
Хăва йывăççи.

**Уяв**

Çуралнă кун уявĕ
Паян Çемен пиччен.
Уяв тăвать уйра вăл,
Хăй тракторĕ çинче.

Уяв ятне типтерлĕн
Юсанăран пулас
Ун тракторĕ ĕçлерĕ
Пĕр тикĕс те хавас.

– Пин пӗрчӗ пултӑр,– тетӗп,–
Пӗр пӗчӗк пӗрчӗрен.
Уяв парни кӗтетпӗр
Ӗҫҫи ӳсӗмӗнчен.

**Ҫил йӗвенӗ**

Ҫил арманӗ вырнаҫтартӑм
Тӗрӗллӗ хапха ҫине,
Ҫил ачи хуҫса хӑварчӗ
Ман арман ҫунаттине.

Ҫил туллашрӗ те ӗрлешрӗ,
У-у! уларӗ тӑвӑллӑн:
– Кам ӗҫре хӑват илесшӗн –
Пултӑр ҫирӗп кӑмӑллӑ!

Тепӗр хут ӗҫе пикентӗм,
Ӑсталарӑм ҫӗн арман.
Шух ҫиле ним мар йӗвенлӗп
Ӑспа ӗҫ пӗрле пулсан.

**Тетте хулара**

Чечек хули. Ем-ешӗл пыллӑх.
Вӗлле ҫумне вӗлле – утар.
«Ӳркев пуссассӑн пулмӗ ырлӑх»,–
Сӗрлеҫҫӗ хуҫисем хастар.

Ҫапла пыл хурчӗсем ӗҫлеҫҫӗ
Ир пуҫласа сӗм ҫӗрлеччен,
Пылне пӗркенчӗкпе витеҫҫӗ
Карас хутламӗ туличчен.

Уҫланкӑна тухсан ӑнлантӑм:
Ӗҫлевҫӗ ӗҫчене савать.
Пылак пыла епле тутанмӑн
Хуҫи пулсассӑн тараватъ.

**Вулав урокӗ**

Чак Чакак хӑй чӗппине
Лартнӑ вӗрене ҫине,
Вулама хӑнӑхтарать,
«Чак!»,– тесе калаттарать.

Вӗрене ҫулҫи кӗтеслӗ,
Йӗрлӗ, йӑрӑмрӑ, хӗреслӗ...

Çыру евӗрлӗ тӗрри –
Вулас килет çав тери.

– Çулçă мар ку – чăн юмах,–
Тет чӗппи пуçне ухсах.
Амăш темшӗнваскамасть,
Малалла вулаттармасть.

**Хӗрӗх Ура**

– Хӗрӗх Ура – çутă хурт.
Унăн хӗрӗх пушмак пур!
Пӗр пушмакӗ такăнсан та
Ыттисем утаççӗ танлăн.
Çутă хурт çавна пула
Тухнă тет инçе çула.

Ăна шăпчăк курнă тет
Пӗрле ташша чӗннӗ тет:
– Хӗрӗх Ура – çутă хурт,
Санăн купăс пур-и;
– Пур!
– Тăсса яр-ха купăсна –
Ташша çапар пӗр кана.

Хӗрӗх Ура васкаман,
Ташă картине кӗмен.
Ури хӗрӗх пулнăран
Çăлăннă тет инкекрен.

**Ачасем çитӗннисене панă сӗнӳ**

Пире ӳстернӗ аннесем
Калаççӗ ăшă сăмахсем.
Аннен ӗçчен ачаш алли
Тăвасшăн пурнăçа тулли.

Пире ӳстернӗ аннесем
Юрлаççӗ çепӗç юрăсем.
Ăçтан килеççӗ хӗрӗнсе
Тискер, хăрушă сăмахсем;

Мӗн-ма тухаççӗ вăрçăсем,
Мӗн-ма переççӗ пăшалсем;
Çын вӗлерен хушусене
Ма кăлараççӗ çын çине;

Пин-пин ача ячӗпелен
Калатпăр эпӗр: малашне

Тĕнче парламенчĕн йышне
Суйласчĕ йăлт аннесенчен.

Анне тивлечĕ пек саккун
,çе кĕрсен пĕр ырă кун
Пăрахăç пулĕç пăшалсем,
Шăпланĕç пилсĕр вăрçăсем.

**Тĕнче çине çĕмел çинчен тинкертĕм**

Тĕнче çине çĕмел çинчен тинкертĕм
Аннепеле тыр вырнă чух тахçан.
Йĕтем çинчи тыр кăшăлĕ пуль, терĕм,
Ирхи хĕвел шевлиллĕ тухăçа.

Тĕнче çине уй варринчен тинкертĕм
Пĕр ĕç тытсассăн мăшăр аллăма.
Тыр-пул ăсти юхтарнă тар пуль, терĕм,
Çăра калча çинчи çут сывлăма.

Тĕнче çине йĕтем çинчен тинкертĕм
Çулсем иртсен, пĕр тулăх кĕркунне.
Ял-йыш чун-чĕринчи хĕлхем пуль, терĕм,
Тин сăвăрнă сар тулă кăшăлне.

**Ытам**

Ытам тесен аса илетĕп
Аннен чи ăшă ытамне.
Ăна эп кăнтăрла, çĕрле те
Туяттăм пĕчĕкçĕ чухне.

Кăштах ӳссессĕн те, ачашшăн
Мана сиктернĕ утьăкка.
Çут Ункă сывлăхлă ачашăн –
Хĕвел шевлиллĕ хум-сăпка.

Хĕрӳллĕрех ытам эп куртăм
Каллех яш çын шутне кĕрсен.
Пике ытамĕ – çепĕç туртăм,
Телейĕм те пĕрле иккен.

Çулта-йĕрте йыхравлăн сарчĕ
Анне-çĕр  аслă ытамне.
Ыраш пуссиллĕ ылтăн аркă
Ят-сумлă турĕ ывăлне.

Мĕнпур ытамсене хушсассăн
Кĕретĕп пурнăç ытамне –

Чӑн тивӗҫлӗ кӑна пуласчӗ
Тӑван ҫӗршыв юратӑвне.
Ӳкерчӗк

Ункӑ шывӗ тӑрӑ-тӑрӑ,
Тутлӑн, шӑппӑн тӗлӗрет.
Шыв ҫинче илемлӗ, йӑрӑ
Пӗр чӗкеҫ вӗҫсе ҫӳрет.

Илемне ытараймасӑр
Кайӑк чӑпӑрт чуп тӑвать,
Куллине пытараймасӑр
Юхӑм пичӗ пӑч путать.

**«Тутар тытмасть»**

Ачалӑх арчинче пит кивӗ
Манми ӳкерчӗк упранать:
«Тутар тытать, тулта пит сивӗ»,–
Анне хӑратарах калать.

Ҫири тум-тирӗм питӗ мар та...
Чупас килет-ҫке урамра.
Атте-анне кӑштах юптарнӑ
Пире шӑнса пӑсӑласран.

Ҫитӗннисем тула ӗҫлетчӗҫ.
Пӳртре аппа та эпӗ ҫех.
Вӑл пысӑк – кантӑка ҫитетчӗ.
Мана пӑхтарчӗ ҫӗклесе.

Пӗр лавҫӑ лашине тӑратрӗ,
Калаҫрӗ  аттепе хастар:
«Ыр ҫыннӑм, ҫӗр выртма пулать-ши;
Эп Шӑмӑршӑ енчи тутар».

Ҫакна илтсессӗн васкаваррӑн
Чӑматпӑр кӑмака хыҫне.
«Тутар тытать, миххе тултарӗ»,–
Пӑшӑлтататпӑр шикленсе.

Пӳрте кӗрсен тутар тытмарӗ,
Кӑларчӗ шушкӑ михӗрен.
Шӳтле-шӳтле унпа сӑйларӗ:
«Ан хӑрӑр тек тутарсенчен».

«Тутар тытмасть-ҫке, шушкӑ пачӗ»,–
Аппам пӗлтерчӗ шухӑшне.
Ҫапла мана та паллаштарчӗ

Çĕршывăн туслă çемйипе.

**Пĕрремĕш утăм**

Картлашка çинчен анасшăн
Хырăмпа шăвать ача.
Пысăк эп тесе каласшăн,
Хăй çулталăкра анчах.

Тинкерсессĕн пукан урлă,
Инçе мар тĕнче хĕрри.
Ун енне пĕр утăм турĕ.
Ӳкрĕ, кăшкăрчĕ шари.

Тăчĕ те... Ача – карапçă:
Тытнă пуканран маттур.
Çивĕч кайăк – вут-караппăл –
Малалла хăюллăн çур.

Саншăн хытă тунсăхланă
Уйăхпи пăхать çӳлтен.
Кĕтнĕрен илмешкĕн маннă
Çĕклемне хулпуççинчен.

Туллипе сана пуç тайрĕ,
Сунчĕ ăнăçу кăна.
Хăнара çӳре сăпайлă,
Пурнăçра ан пул хăна.

Шурă-шурă шуçăм витĕр
Вĕç «Хуракăш çулĕпе».
Алăк уçĕ Çăлтăрпи те
Эс пырса шакканипе.

... Ӳкрĕ хăямат пуанĕ.
Шарт сикми сăна мала.
Пурнăçра тĕрев йăванĕ –
Таянмасăр утмалла.

**Чĕп хуралĕнче**

Хур кĕтĕвĕ кĕтеттĕм çырмара.
Хам пулнă пулĕ пиллĕк-улттăра.

Сасартăк куртăм кӳршĕ йыттине.
Вăл, пысăкскер, çывхарчĕ ман енне.

Вĕлтлетрĕ шухăш: хăвăртрах тарас.
Тĕллевĕ йыттăн – хăравçа çыртас.

Шар çурчĕ çвĕч шăлĕпе йĕмме.
Эп хатĕрччĕ ĕсĕклесе йĕме...

Анчах ертӳçĕ хур măйне теса,
Хăюллăн пычĕ хыттăн чашкăрса.

Çунат сулмаклăхне туйса илсен
Тăшманăм тарчĕ хӳрине хĕссе.

Чуна хытартăм эп – «чĕп хуралçи».
Мăнаçлăн такăлтатрĕ хур аçи.

Ăнкартăм – ăс парать хăй чĕлхипе:
Чыса упра пуçа сыхланă пек.

**Шыв арманĕ**

Шыв арманĕ ăсталатчĕ
Тантăшăм кустăрмаран.
Ĕçĕ унăн анлăланчĕ
Тухнă май ачалăхран.

Тантăша итлет халь Атăл.
Мăшăр аллинче – хăват.
Анлă юхăма чарать те
Шлюзсемпе çăварлăхлать.

Çав арман – хăех систерчĕ –
Пушăлла кĕрлеттермен,
Тĕрĕслерĕ те ӳстерчĕ
Çын ăсталăхне куллен.

**Асамлă кăлтăрмач**

Вăййа чĕнсе пулас
Юрпа перет кăрлач:
Урок туса пĕтертĕн-и; Атя!
Каятпăр йĕлтĕрпе
Тус-тантăшпа пĕрле,
Çухатмăпăр телейлĕ вăхăта.

Шур кĕрт çинчи мулкач –
Асамлă кăлтăрмач–
Ăçта ытлаваскатăн-ха; Тăхта!
Çумрах фотопăшал,
Кучран час ан çухал –
Çаклатăпăр телейлĕ вăхăта.

Анчах кĕтмест мулкач.
Хӳри кĕске пулас.
Юр-кĕрт хыçне пытанчĕ – курăнмасть.
Чупать хыпаланса,
Мулкач пек айкашса
Ачалăх вăхăчĕ – асамлă кăлтăрмач.

**Кашни ăру ĕненĕвне**

Кашни ăру ĕненĕвне
Упрать пĕр самана кăна.
Ĕненмесен этем хăйне
Йăван та юл măн çул хĕрне.

Кашни ăру ăс-хакăлне
Туптать пĕр самана кăна.
Вăл çав ăс-хакăл аллине
Парать çĕр-шыв ăраскалне.

Кашни ăру ĕçне-хĕлне
Курать пĕр самана кăна.
Хурать те тараса çине
Килес ăру парать хакне.

**Путене**

Çу. Ыраш та пуç кăларнă.
Ярăнса вылять ăрша.
Ăнсăртран эп асăрхарăм
Ик пучахлă ыраша.

,ç майне кура кун иртĕ:
Ик пучах – телей палли.
Ылтăн ярăм пĕрчĕ тирĕ
Ун çине хĕвел алли.

«Кил те тыт!» – янрарĕ сасă.
Кураймарăм кайăкне.
Йĕкĕр сар пучах тулсассăн
Тытăп, путĕр путене.

**Пулăшрĕ**

Çăка патакĕнчен арман туса пăхасшăн
Ача пуçларĕ çĕçĕпе каскалама.
– Амантăн аллуна, пăрах çĕççе,– тет ашшĕ,–
Хитре арман туса паратăп ак хамах.

Тăмран йăваласа ача шăхлич тăвасшăн,

Çыхасшăн вăйă çеммипе ĕç кĕввине.
– Аллу лапраланать, ан аппалан,– тет ашшĕ,–
Лавккаранах туянăпăр хатĕррине.

Вăр çаврăнман ачалăхри арман çуначĕ,
Ши-шу! Ши-шу! тесе шăхлич те шăхăрман.
Кун-çул чуппин арманĕ вĕçĕм çаврăнать-çке –
Шăхличĕпех çырлахмĕ ывăлĕ паян.

Вăл ĕнтĕ çитĕннĕ кĕрнеклĕ, ырă-сывă.
Алли лапăртанман, ĕçре пилĕк авман.
– Атте, эп авланма шутларăм,– терĕ ывăл,–
Хăçан мана эс шурă пӳрт лартса паран;

**Çитмĕл çичĕ пĕркеленчĕк**

Çитмĕл çичĕ пĕркеленчĕк
Кукамай сăн-питĕнче.
Пурнăç çулĕ йĕркеленчĕ
Кукăр-макăр йĕрсенче.

Ах, кун-çул тĕрленчĕкĕ
Тарăн пĕркеленчĕклĕ.
Мĕнпе чĕрмеленĕ-ши;
Мĕн каласа çырнă-ши
Çак тĕрленчĕкре;

Çырăвĕ ӳкерчĕклĕ,
Тарăн пĕркеленчĕклĕ.
Савăнмалли пулнă-ши,
Кулянмалли çырнă-ши
Çак ӳкерчĕкре;

Çитмĕл тĕрĕллĕ ӳкерчĕк
Кукамай кĕпи çинче.
Чĕмсĕр хĕлĕхлĕ пĕркенчĕк –
Чĕнтĕрленĕ тĕрринче.

Тĕрĕсен тĕрленчĕкĕ –
Вăрттăнлăх ӳкерчĕкĕ.
Камăн ятне çырнă-ши;
Мĕн каласа çырнă-ши
Çак тĕрленчĕкре;

Тĕрĕ мерешкеллĕ-çке,
Пурнăç çулĕ евĕр-çке...
Кукамай кун-çулĕ-ши,
Несĕлсемĕр ячĕ-ши
Çак ӳкерчĕкре;

**Çын кунçулĕ кĕске**

Çын кун-çулĕ кĕске –
Савăнмалăх çеç.
Мĕншĕн хуйхă тесе
Ĕмĕр мĕскĕн çӳрес;

Çын кун-çулĕ кĕске –
Калаçмалăх çеç.
Мĕншĕн пилсĕр ĕçпе
Çынна сивĕтес;

Çын кун-çулĕ кĕске –
Ыр тумалăх çеç.
Мĕншĕн хурлăх çине
Тепĕр хурлăх илес;

Пурăнасчĕ хуллен
Сывлăш тухнă чух.
Ырлăхран иксĕлмен
Хĕвел пăхнă чух.

**Кукамай кĕпи**

Кукамай çиййĕнче шур чечен катан пир.
Çакăн евĕр кĕпе тек тупаймăр эсир.
Уявра çеç ăна кукамай тăхăнать,
Урăх чух çак тупра арчара упранать.
Мĕн пирки хаклă мул пек упрать-ши ăна;
Ватă çын кăмăл-туййăмĕ пит ăрасна.
Ăс-тăна пăлхатсан та пĕлсе çитме çук.
Тĕсĕ кайнă пирре ывăтса ярас чух

Аллипе ачашлать, хăй çумне пăчăртать,
Тутăх тивнĕскерне юратса чуп тăвать.
Мĕн пирки кукамай кĕпене пăрахмасть;
Вăл çапла хăтланни пусăма вырнаçмасть.

Кукамай, шухăша путнăскер, шăпланать.
Унăн кивĕ кĕпи çырăва çаврăнать.
Аркинчи эрешне аллипе сĕртĕнет,
Çаннинчи тĕррине куççульпе йĕпетет.
Кукамай пĕр кана хускалмасăр ларать,
Ерипен-ерипен хăйпе хăй сăмахлать:
«Çак кĕпе тĕрринчи несĕлсемĕр ятне
Сăмахпа асăнаймăпăр ĕнтĕ тинех.
Сарă Кун тĕнчинчи Ырăсен çумĕнче».
... Ай, тинех ăша илтĕм ват çын кăмăлне.

Ак мĕн-ма кукамай пăрахмасть кĕпине.

Пахаларăм эп хам та хайхи кĕпене,
Вăхăт тутăхĕ çинĕ чечекĕн тĕсне.
Сарăхайнă арки, тĕксĕмленнĕ пирри,
Çипписем тĕссĕрленнĕ эрешлĕ тĕррин.
Йăм хура тĕслĕ йĕр кĕл пекех шуранка.
Шупкаланнă хĕрли, тĕмпĕл-тĕмпĕл хушка.
Симĕс тĕс кĕрхи çулçă пулса ӳкнĕ пуль.
Кăвак тĕсĕн куçне шур илтернĕ пулас:
Çăлтăр пек чакăрскер халь ытла та чапрас.
Сар тĕсе илнĕ пуль çӳл тӳпе хăй патне –
Тĕлсĕр хумлă йĕр çеç палăртать пиррине.

Тишкерӳллĕ куçпа тинкеретĕп тĕрре:
Пиктограмма сăнне хупăрланă тĕтре.
Тĕрĕри кӳлепе тем каласшăн мана.
Аслă тăхăм чĕнмест-и пире хăнана;
Тăванне пиллесе, тен, тата тем калать;..
Ĕмĕрсен ытамне йышăнса çупăрлать.
Мĕн калать-ши мана çак тăмхаллă çыру;
Ах анчах, чĕлхине ăнланмасть çĕн ăру.
Эп хăлхасăр иккен – илтес çук йыхравне.
Эп чĕлхесĕр иккен – тупас çук хуравне.
Эпĕ куççăр иккен çак хитре тĕнчере –
Хак пама пĕлейместĕп асамлă тĕрре.

Авалхи тĕрĕсен, эрешсен тупсăмне
Кукамай та йăлтах пĕлеймест ахăртнех.
Ун сăмахĕ-халапĕ çапла систерет:
Тĕрĕ – ĕмĕр сасси тата çутă кĕтрет.
Тĕлĕнтермĕш хăват эрешре упранать,
Çав хăват пурнăçа сыпăнма пулăшать.
Тĕлĕнтермĕш çыру паллине вулама
Ăсчахсен азбуки халиччен упранман.
Пурпĕрех эп тăратăп ăна пуç тайса,
Тишкеретĕп ăна хак пама хăтланса:
Тав Турра, çухалман çын кун-çулĕн тĕрри,
Пурăнать-ха тĕс кайнă истори тĕрки.

Кукамай çиййĕнчи кив кĕпе тĕрринче
Куртăм кун паллине, тыткăчи – çут тĕнче.
Хĕресленнĕ йĕрсем – пĕрлешӳлĕх палли.
Вырăн пур киремет ыр-хаярĕ валли.
Хумлă йĕр – шыв унки, вичкĕнни – вут уки.
Ака пуç, кайăк-кĕшĕк, хăмла пултранки...
Хурăнташ-тăвансен йывăççи сарлака.
Йышлă ун туратти, çулçисем те парка.
Пурнăç сăнлăхĕ пур кив кĕпе тĕрринче.

Сарă тĕс йышлăрах тĕрлĕ тĕс хушшинче.
Ку ахаль тĕрĕ мар, ку вăл – пурнăç йĕрри,
Этемпе çут тĕнчен çураçулăх пурри.

Çак çыру пăхăнать тĕрĕсен саккунне:
Шайлашуллă ўкерчĕк тытать илемне.
Тўпепе Çĕр ама – мăшăра пĕлтерет,
Тĕрлĕ тĕс хушăмне вырнаçулăх кўрет.
Кукамай питĕнче те пур пурнăç тĕрри –
Ăшăххи, тарăнни, хĕресле хутламли...
Ах анчах, кукамай питĕнчи паллăсем
(Куртăм эп ун çине сăнаса пăхнăçем)
Пăхăнмаççĕ иккен тĕрĕсен саккунне,
Пĕркелеççĕ кăна хаклă çын сăн-питне.
Капăр сăн-сăпата пăснă пурнăç йўççи –
Ереше куçаймасть терт-нуша пĕрмечи.

Уйрăм тĕрĕ вырнаçнă кĕпе çаннине,
Чалтăркка ерешпе тирĕнет куç тĕлне.
Çав çыру паллинче анлă çул юпленет –
Сăртлăхри сукмакпа сенкерленнĕ инçет.
Çанăри çырура тăвансен ячĕ пур,
Кукăр-макăр сукмак – тăхăмсен çулĕ пур.
Кунпа çĕр пăхăнать уйăхпа хĕвеле –
Каç пулсассăн кайсан та ирпе килмелле.
Çанă вĕçĕн шупкалнă ерешĕсенче
Чакăр çăлтăр палли курăнать ик енче.
Йўç куççуль сăрхăнса ўкнĕрен ун çине
Илĕртўллĕ инçет куçнă пуль тĕтрене.

Пир кĕпе аркинче урăхла тĕрĕ пур.
Шур кĕпе аркинче çут мерчен кайăк пур.
Ай кашни çын патнех вăл çитме ĕлкĕрет,
Çамкаран шаккасах тем çинчен систерет.
Çунатне саркалать – Сарă Кун таврăнать,
Çунатне хутлатать – тĕттĕм каç пуçланать.
Çак çыру кăтартать çĕн ăру ĕрчевне,
Çак çыру калăплать кăк ама сăнарне.
Аркăпа йышăнать вăл Çĕн Кун кайăкне
Тăснă май тепĕр ăстрăм кун-çул çиппине.
Ку пурне те тивет, шăпаран иртме çук –
Аркăпа хупланса çăлăнса юлма çук.

**Çиччĕ виç те пĕрре кас**

– Миçе шăтăк -ши пуçра; –
Ыйтнă тет ăс-тăн патши,
Хаваслă Математика.
– Çакна илтсен Шутлайккин

Пуçне ватнă чылайччен,
Анчах хуравне пĕлмен.

– Шутла, шутла, Шутлайкин,–
Васкатнă Математика,–
Пуçунта шăтăк нумай-и;
Шутла, хăшĕ ытлашши;
Ăс-тăн юхса тухасран,
Айван пулса юласран
Хăш шăтăкне пўрнепе
Хупламалла хăш чухне;

Шута кайнă Шутлайккин,
Пўрне хуçсах шутланă:
– Икĕ куç, икĕ хăлха
Курма-илтме кирлĕ-ха,
Икĕ шăтăклă сăмса
Палăртать мĕн пур шăрша.
Тата пĕртен-пĕр çăвар –
Кирлĕ мар чухне ан кар.
Çичĕ шăтăк пĕтĕмпе,
Пурте кирлĕ çынсене.

– Тĕрĕс ăнкарать Шутлайккин,–
Тенĕ Математика,–
Халĕ шутлăпăр задача:
«Пурнăç çирĕппĕн ыйтсан,
Çынран катăк пуласран
Çичĕ шăтăклă пуçпа
Ыйтăва татса пама
Миçе хут шутламалла;»

Халĕ те шутлать Шутлайккин,
Тĕрĕс хурав параймасть тет.
Ачасем, пĕлетĕр-и,
Пысăк ĕçе пуçличчен,
Кирлĕ утăм тăвиччен
Миçе хут шутламалла;

Хăлхара янрать пин сас:
– Çиччĕ виç те пĕрре кас!
Çыннăн пуçĕ шăтăк мар,
Ку вăл – пирĕн пархатар.

Халь Шутлайккин та ăнланчĕ:
– Ăс пухмашкăн пур-ха шанчăк!

**Икĕ вут хушшинче**

Уйăх та пур, хĕвел те пур.
Çўл тўпере пин çăлтăр пур –
Ярăмланса çунаканни,
Çĕр тĕнĕлне тытаканни.

Ырă та пур, усал та пур.
Ик вут хушшинче этем пур –
Хĕрў хĕрсе пиçекенни.
Хăй шăпине туптаканни.

Тăван та пур, тăшман та пур.
Вĕсен хушшинче илем пур –
Чун шевлине çутаканни,
Çут тĕнчене çăлаканни.

**Вĕрентекене**

Тĕксĕм пĕлĕт карăнсан та,
Юр е çумăр тăкăнсан та
Пĕлў çути кўретĕн –
Хĕвел пулса çўретĕн.

Арăш-пирĕш пурнăçра та,
Хуйхă пуснă вăхăтра та
Çынна ырлăх кўретĕн –
Хĕвел пулса çўретĕн.

Яшлăхра та çухалмасăр,
Ватлăхра та тайăлмасăр
Кăмăл ăшши пиллетĕн –
Хĕвел пулса çўретĕн.

**Улăп чĕрĕлни**

Икĕ ача урама
Тухнă пĕрле выляма.
– Тĕлĕнмелле сас-хура
Çўрет пирĕн таврара,–
Шăппăн пĕлтерет пĕри.
– Мĕн çĕнни; – ыйтать тепри.
– Улăп чĕрĕлнĕ!
– Хăçан;
– Хăçанне пĕлен кайран!
– ,ненместĕп.
– Ан ĕнен.
– Тен, шўтлетĕн;
– Хăв пĕлен.
– Хăрах куçпа куртăн-им;
– Çук-ха, хыпар илтрĕм тин:

Ютра мар тет – Раççейрех,
Кăмăллă Чăваш Енрех –
Пирĕн пек ачасемех
Кĕнĕ «Сывлăх» ушкăнне...
Ăмсанатăп вĕсене.

– Вăт хыпар ку! «Сывлăха»
Пирĕн те çырăнмалла.
– Çитмелле çав спорт клубне,
– Пĕрле шырар адресне.
– Хулара-и;
– Хулара.
– Районта-и;
– Районта.
– Тен, Интернет систерет;
– Каламасан кам пĕлет;

Никам кĕтмен самантра
Çитет виççĕмĕш ача:
– Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă –
Сывлăх çулĕпе чупатăп.
Кам зарядкăна тухать –
Улăп мускулне тупать.

– Ай-уй! сывлăхлă ача
Хамăр кўршĕрех пурнать.
– Унпа юнашар тăма
Пире кам чăрмантарать!;

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Пурте хускану тăватпăр.
Кам зарядкăна тухать,
Çавă сывлăхлă пулать.

**Тĕкĕр тĕрĕс кăтартать**

Ыйхăран ирпе вăрантăм.
Вырăн çинче йăвалантăм.
Тăмалла-ши – кăмăл çук.
Выртмалла-ши – чăтăм çук.

Асатте калать:
– Иук!
Эс мĕнле ача, Петюк;
Йăлт! çеç сикрĕм мечĕкле,
Пăхрăм тĕкĕр еннелле.

Курăнать унта такам:
Чармака пит-куç, ам-ам,

Çӳçне-пуçне яра панă,
Шывпа супăнь тĕлне маннă.

– Ку эп мар – темле пират.
Тĕкĕр йăнăш кăтартать.

Çăвăнтăм, çӳçе турарăм,
Тăрăшса шăла тасатрăм.
Вырăна хамах майларăм,
Кĕпене хитре якатрăм.

Физзарядка тунă чух
Асатте калать:
– Петюк!
Пĕлтĕн-и, халь мĕн тăвать
Тĕкĕр ăшĕнчи пират;

Пăхрăм та – курнать куçа
Ылтăн çӳçлĕ сар ача.
Чиперскер – тĕнче илемĕ.
Ман пекех кулать: ку – эпĕ.

– Тарнă пaçăрхи пират –
Тĕкĕр тĕрĕс кăтартать.

**Чĕрĕп – усăллă хăна**

Тем сăлтавпа кĕркунне
Пырса кĕнĕ картишне
Йĕплĕ-йĕплĕ чăмăркка.
Савăнтарчĕ Петюка.

– Килех, кил, кĕтнĕ хăна,
Сĕт ĕçтерĕпĕр сана,–
Тет вăл ăшшăн,– пулмăн ют,
Усă кӳрĕн икĕ хут:

Пĕрре уяв тăвăпăр,
Юрлăпăр та ташлăпăр,
Тепре чăрăш лартмăпăр –
Сана капăрлатăпăр.

**Планетăпа чĕре**

Çаврăнать пĕр хӳтлĕхсĕр планета
Сеп-сенкер тӳпе уçланкинче,
Сых ятне шур пĕлĕт пĕркенет вăл
Шикленсе тĕнче хурахĕнчен.

Мĕншĕн чурăссăн тапать чĕреçĕм
Вырнаçмасăр кăкăр кăшкарне;
Ирĕке тухса йăлт сўнтересшĕн
Тăнăçлăх утравĕн пушарне.

Чурăсскерĕм! Пĕр-пĕччен сиреймĕн
Çут тĕнчен пур пĕтĕм хуйхине –
Çĕр-планета çаврăмне кĕресчĕ
Çавăрма этемлĕх кăмăлне.

Çураçулăх кăшăлне тăрсассăн
Çĕр-планетăпа этем чĕри
Чун хăратмăш пуррине пăхмасăр
Танлăн çавăрĕç пĕрне-пĕри.

**Телей курки çĕрĕллĕ**

Телей курки çĕрĕллĕ,
Аври хитре тĕрĕллĕ.
Темшĕн вăл алла кĕмест –
Шерпетне сыпма сĕнмест.

Ятран паман куркана
Уссăр кĕтсе ларас-и;
Хама пўрнĕ шăпана
Йўç куркара шырас-и;

Тулли курка кăмăлне
Шалт хумасан кам чухлать.
Мерчен çĕрĕ вырăнне
Сăмах çаври тупăнать.

Ĕçмен куркан тути çук,
Пўрмен шăпан телей çук –
Тулли курка пушантăр,
Сăмах çаври салантăр.

Çынна телей суннă чух
Телей курки хухас çук,
Чунтан сума сунă чух
Чун ăшши сивĕнес çук.

Çепĕç сăмах çаврăнтăр –
Сим пыл пулса таврăнтăр.
Тавсси, тăван! Чăн сăмах –
Телей курки хамăртах.

**Этем хакне ĕçне кура виçеççĕ**

Хӑть икӗ пӑт, хӑть вунӑ пӑт тайсан та
Паттӑрсене хаклатпӑр пӗр виҫеллӗн.
Мухтавлӑ ӗҫӗ ылтӑна куҫать,
Ҫын ячӗ-сумӗ сулӑмне хушать –
Этем хакне ӗҫне кура виҫеҫҫӗ.

Хӑть икӗ пӑт, хӑть вунӑ пӑт тайсан та
Путсӗрсене хаклатпӑр пӗр виҫеллӗн.
Хисепсӗр ӗҫӗ ҫӳп хакне юлать,
Кун-ҫул пархатарне сая ярать –
Этем хакне ӗҫне кура виҫеҫҫӗ.

**Ҫӑкӑр лаши**

Хӗлӗн-ҫӑвӗн вӑл ҫулран юлман.
Ик енче ун пулнӑ ик турта.
Ҫирӗм ҫул хушши юрта-юрта
Ял-йыша ӑш ҫӑкӑрсӑр лартман.

Ерипен ҫӳреттӗмӗр ялан,
Халиччен те хыҫалта пулман.
Тӑвалла хӑпарнӑ чух паян
Янаварӑм ӳкрӗ ураран.

Кутӑнла кӳлменччӗ пӗккине –
Ӑсатмашкӑн тиврӗ мӗскӗне.
Ӗҫӗ йывӑр пулнӑ-ҫке лашан...
Туртнӑ чух ҫакна асӑрхаман.

**Йытӑ ӗненӗвӗ**

Хӳрине вылянтарать ачашшӑн,
Катаран сисет хуҫи ҫывхарнине.
Уруна пар, шанчӑклӑ юлташӑм,
Тивӗҫлӗ пулнишӗн ҫын ӗненӗвне!

Ҫыннӑн пурнӑҫне, тен, ӑмсанатӑн:
Ӑшӑ пӳрт сан ҫук, урай кавирсӗрех,
Сивӗре те тивӗҫмест кӑҫатӑ,
Шӑрӑх кунсенче ҫӳретӗн кӗрӗкпех.

Эпӗ йыттӑма халь ӑмсанатӑп.
Уншӑн чи малта – ҫынна ӗненесси.
Юлташне путсӗрленсе сутмасть вӑл,
Йывӑр самантра та ҫук улталасси.

Йытӑ пурнӑҫне ҫынна сунмастӑп,
Шанӑҫ уҫҫине упрасчӗ йытӑлла.
Эй, ҫынсем! Ҫын евӗр пурӑнасчӗ,

Йĕксĕке тухмасăр, юлташла.

**Хир мулкачипе калаçни**

– Эй, мăнтарăн хир мулкачи, мĕншĕн макăран;
– Макăрмастăп эп – кулатăп, кăмăллă тăван.
Ылмашаççĕ вĕçе-вĕçĕн телейпе хĕн-хур.
Тăшмансем çеç мар, туссем те çума-çумăн пур.

Ăнсăртран – кĕрĕстин! Сунарта пăшаллă çын.
Кĕрĕк тĕрĕс-тĕкелех – эппин, пурте йĕркеллех.

– Эй, мăнтарăн хир мулкачи, мĕншĕн савăнан;
– Савăнмастăп эп – йĕретăп, кăмăллă тăван.
Çитмĕл çухрăм çеçен хирпе вĕçсе пынă чух
Тус-тăванпа савăнмалăх лăпкă вырăн çук.

Ăнсăртран – кĕрĕстин! Сунарта пăшаллă çын.
Кĕрĕк тĕрĕс-тĕкелех – эппин, пурте йĕркеллех.

– Эй, мăнтарăн хир мулкачи, мĕнле пурăнан;
– Пурăнатăп ырлăха эп, кăмăллă тăван.
Çитмĕл çухрăм çеçен хирте çичĕ çурам пур.
Кунпа çула сыпăнтарма манăн пурте пур.

Ăнсăртран – кĕрĕстин! Сунарта пăшаллă çын.
Кĕрĕк тĕрĕс-тĕкелех – эппин, пурте йĕркеллех.

**Мана чĕмсĕр тееççĕ**

Мана чĕмсĕр тееççĕ,
Вăййа тухма чĕнмеççĕ.
Шур-шур урлă каçнă чух
Сар кайăка итлерĕм...
Сăвăласа калаçрăм,
Çаврăм-çаврăм юрларăм.
Инçе çулта пĕтменшĕн
Кайăк пилĕ çитрĕ-шим –
Аслă уя тухсассăн
Юрăç теме пуçларĕç.

Мана уксах тееççĕ,
Ташша тухма чĕнмеççĕ.
Атăл урлă каçнă чух
Акăш ташла пуçларĕ...
Хам та унран юлмарăм:
Ишрĕм, чăмрăм, ташларăм.
Аслă шыври путманшăн
Акăш пилĕ çитрĕ-шим –

Атăл урлă каçсассăн
Ташăç теме пуçларĕç.

Мана вăйсăр тееççĕ –
Паттăр пулас килетчĕ.
Вăрман урлă каçнă чух
Хаяр упа тапăнчĕ...
Тытăçуран тармарăм,
Утăм калла чакмарăм.
Вăйсăр тесе ÿкменшĕн
Паттăр пилĕ çитрĕ-шим –
Çав упана çĕнсессĕн
Паттăр теме пуçларĕç.

**Пушă пучах**

Нуша хутаçĕ çакнă тейĕн
Тулли пучахлă ыраша,
Хирте ларать пуçне чикейнĕн
Аран йăтса йывăрăша.

Юнашарах çĕкленнĕ çÿллĕ
Каю калчи – парка ыраш.
Пуçне ухать вăл килĕшÿллĕн,
Сасси те кĕвĕллĕ, ачаш.

Вырма çитсен те авăнмарĕ
Уйри чи курăмлă пучах.
Пĕр пĕрчĕ те вăл параймарĕ –
Çухалчĕ пуш пучах пулсах.

**Йыхравпа килес пулсан хăна-вĕрле**

Йыхравпа килес пулсан хăна-вĕрле
Чăвашсем тÿрех чĕнеççĕ тĕпеле,
Алăк урлă ал памаççĕ пĕр-пĕрне,
Малалла иртсемĕр теççĕ хăнине.

Ăсатса ярас пулсассăн та кайран,
Ал тытса телей сунаççĕ урамра.
Алăк урлă ал памаççĕ нихăçан –
Уйрăлу валли пÿрт алăкне касман.

Алăк урлă та ал памăп тăшмана,
Кирлĕ мар пăсмашкăн ырă йăлана.
Алăка касмаççĕ уйрăлу валли –
Хăлăпне ан тыттăр çичĕ ют алли.

**Кăмпара**

Кивĕ çулçă айĕнче
Уçрăм эпĕ çĕн тĕнче:
Шăкăрин-шак пўрнеске...
Пурте сунчăк тытнă-çке.

Çумăр çунă ирхине.
Халь хĕвел пăхать хавас.
Ĕнтĕ пўрнескесенне
Сунчăкĕсене хывас.

Халех тăрăр черете –
Вырăн пур-ха пештĕрте.

**Николай  Ишентей**

Чăваш  Республикин патшалăх Ялавĕ

Патшалăх ялавĕ – тăванлăх саламĕ,
Вĕл-вĕлкĕш мăнаçлăн сенкер тўпере.
Санра – хĕвел тĕсĕ те пурнăç хавалĕ,
Санра – çĕр ăшши, сиплĕх вăйĕ, тĕрек.

Мухтавлă Ялав – çутă ĕмĕт хĕлхемĕ,
Çĕклен çўлерех «Виç хĕвел» айĕнче.
Чăваш хĕрĕ-арĕ хыпса хĕрўленĕ
Эс вĕркĕшнĕçемĕн тўпе анинче.

Патшалăх ялавĕ – тăванлăх хунавĕ,
Упра несĕлсен ĕмĕрхи йывăçне.
Ялпа хулана пил сăмахĕ салантăр,
Ыр сунăмĕ çиттĕр тĕнче анлăшне.

Ялав вĕлкĕшсен çĕкленет чăваш ячĕ.
Ялан çўлте пултăр ыр сунăм тĕрри.
Санра – Тўпепе Çĕр-аннемĕр хăвачĕ,
Санра – халăх ăсĕ, тивлечĕ, юрри.

**Пулас космонавтсем**

*Этем тĕнче уçлăхне вĕçме пуçланăранпа çур ĕмĕр çитнĕ сăлтавпа.*
*Автор.*

Шкул.
Сас пачĕ шăнкăрав.
Кĕр-кĕр-кĕр пуçланчĕ шав.
Виççĕмĕш классем вара

Пухӑнчӗҫ пӗр чӑмӑра.

Тӑчӗҫ глобус тавралла
Тавлашуллӑ кӑшӑла:
Калаҫаҫҫӗ, канашлаҫҫӗ,
Тем те пӗр сӳтсе яваҫҫӗ.

– Тантӑшсем, каяр пӗрре
Интереслӗ ҫӳреве! –
Тет Максим,– пурте пӗрле
Ыткӑнар-и вӗҫеве!

– Атьӑр,– теҫҫӗ темиҫен, –
Ҫӗр ҫине пӑхар ҫӳлтен.
Глобус пек-и чӑнласах
Е ҫатма пек лаптакрах;

– Эх, ӳсесчӗ,– терӗ Уля,–
Чӑннипех вӗҫме май пулӗ.

– Чим-ха, Уля,– тет Максим ,–
Тахҫанччен кӗтесшӗн-им;
Ман халех вӗҫес килет.
Хатӗрлер-и ҫӗн проект!

– Атьӑр!
– Атьӑр, план тӑвар,–
Килӗшет ик-виҫ хастар.
Пӗтӗм класс:
– Вӗҫетпӗр!– терӗ,–
Пӗрлешӳ ҫӳле ҫӗклетӗр!

– Манӑн ӗҫлӗ сӗнӳ пур,–
Сас парать хыҫран Артур,–
Ӑсталатпӑр ним те мар
Стратостат е пысӑк шар.

– Хӑмпӑпа инҫе ҫӳреймӗн
Ҫиле май кӑна вӗҫетӗн,–
Хирӗҫлет ӑна Захар,–
Атьӑр дельтоплан тӑвар.

– Дельтоплан ытла мӑран,
Ун мотор ҫук,– тет Раман,–
Самолет ҫине ларсан,
Хӑть мӗн калӑр та, аван.

– Самолет та, ахӑртнех,
Модӑран тухать кӗҫех.

Звездолет кӳринччĕ шанăç... –
Ĕмĕтлĕн калать Снежана.

Митя, командир пекех,
Тухрĕ чи мала тӳрех:
– Тăрăр пурте çакăнта,
Звездолетчиксем, старта!

Пĕчĕк ушкăн, виççĕн-тăваттăн –
Çирĕп сывлăхлă команда –
Чăмăртанчĕ кĕпĕр-кепĕр
Чăнкă пирамида евĕр.

Командир хушать çӳлтен:
– Экипаж, скафандр ил!
Алтăр çăлтăр – пирĕн кил.
– Атьăр!– терĕç темиçен.

– Ха-ха-ха! Фантастика!–
Ахăлтатрĕ Настенька,–
Космоса парăнтарма
Çерçилле сиккелемеççĕ,
Каймалла космодрома.
... Çăлтăр хулинче кĕтеççĕ...

– Космодрома! –терĕ Уля,–
Чăн-чăн космонавт патне,
Тен, тытса пăхма май пулĕ
Штурвалне ракетăнне.

– Атьăр!– терĕç пурте,– атьăр!
... Митьăна туртса антарчĕç.
Лия чи çӳле хăпарчĕ,
Кайăк пек вăл çунатланчĕ.

– Халь орбита станцийĕ
Меллĕрех вĕçме,– тет Лия,–
Çĕр планета, ан кӳрен!
Сывă пул!
Тĕл пуличчен!

Лийăна чарать Максим:
– Билетне туянтăн-им;
– Билет булка мар – илетпĕр,
Буфета паян кĕместпĕр.

Канашлаççĕ, тавлашаççĕ,
Тем те пĕр сӳтсе яваççĕ,
Калăн пĕтĕм класс ачи –

Уçă космос вĕçевçи.

_________

– Асанне ямасть мана,–
Тытăнса тăрать Анна. –
Вăхăтра таврăнмасан
Шикленсе çӳрет ялан.

– Тĕттĕмччен кайса килетпĕр!
– Никама та систерместпĕр!–
Кĕр кĕрлеççĕ пĕрисем,
Йăпатаççĕ теприсем:

– Ĕлкĕретĕн паянах
Асаннӳ патне, Анна –
Сакăрвунă çеккунтра
Çаврăнатпăр Çĕр тавра.

– Атьăр,– тет Максимка,– атьăр!
Паянах вĕçсе каятпăр.
Тăваттă, виççĕ, иккĕ – старт!
Ачасем тапранчĕç кар!

... Ах анчах, çав самантрах
Алăк уçăлчĕ вăштах.
Шăпăрт пулчĕ пĕтĕм класс:
Çӳреве кайма тăхтас.

Лев Кузьмич класа кĕрет
Çирĕппĕн утса иртет.
– Ырă кун, вĕрентекен! –
Саламлаççĕ ачасем.

– Ырă кун, виççĕмĕш класс! –
Лев Кузьмич хурав парать.
«Кĕçĕн йыш паян хавас», –
Вĕрентекен асăрхать.

Куçлăхне ятарласа
Сăмси вĕçне шуçтарать,
Кирлĕ канашсем парса
Класс ачисене сăнать.

Пĕри ĕçлет тимлесе –
Вулать, çырать, пуç ватать,
Тепри темшĕн шикленсе
Пуçне ун-кун пăркалать.

Урок вĕçленсен кăна

Куçлăх ларчĕ вырăна.
Пурте çăмăллăн сывларĕç,
Тавлашу каллех пуçларĕç:

– Лев Кузьмич, каяр пĕрле
Интереслĕ çўреве!
Ак, тытатпăр та пĕрре
Ыткăнатпăр вĕçеве!

– Атьăр, стратостат тăватпăр,
Пĕтĕм класс унта вырнаçтăр.
Лев Кузьмич калать:
– Аван
Самолет çине ларсан.

– Лев Кузьмич, самолетсем
Ĕнтĕ пурнăçран юлаççĕ.
Вĕçевре звездолетсем,
Пуринчен малта пыраççĕ.

Лев Кузьмич шалт тĕлĕнет:
– Вĕсене кам курнă тет;
Командир калать:
– Кунтах!
– Зведолетчиксем – старта!

Пĕчĕк ушкăн, виççĕн-тăваттăн –
Çирĕп сывлăхлă команда –
Чăмăртанчĕ кĕпĕр-кепĕр
Чăнкă пирамида евĕр.

Командир хушать çўлтен:
– Экипаж, скафандр ил!
Алтăр çăлтăр – пирĕн кил.
... Тĕлĕнет вĕрентекен:

– Звездолет;
– Фантастика!
– Ăс-тăн çавăрттармăшĕ!
– Чыс-мухтав! – янрать класра,–
Космонавтсене, ура!

– Ура! – терĕç пурте, атьăр. –
Митьăна туртса антарчĕç.
Лия чи çўле тăрать,
Кайăк пек çунатланать.

– Халь орбита станцийĕ
Меллĕрех вĕçме, – тет Лия. –

Алă сулăпăр çӳлтен,
Шкул! Тепре тĕл пуличчен!

Пирамида саланать,
Класс пĕр йĕркене тăрать.
Пурте хатĕр похода.
Командир тăрать малта:

– Лев Кузьмич, тăван планета
Мечĕк пек çавра тесеттĕр,
Вăхăт çитрĕ – тĕрĕслер,
Ун тавра вĕçсе килер.

– Çук, тăхтав вĕçленмелле,
Урока ĕлкĕрмелле,–
Килĕшмест вĕрентекен.
Ӳкĕтлеççĕ ачасем:

– Лев Кузьмич, часах çитетпĕр,
Урокчен кайса килетпĕр.
Сакăрвунă çеккунтра
Çаврăнатпăр Çĕр тавра.

Пурте:
– Атьăр, атьăр!– теççĕ,
Тăрăс-тăрăс сикелеççĕ.
Лев Кузьмич лаках ларать ,
Çамрăк йыш мĕскер тăвать;

– Тăваттă, виççĕ, иккĕ – старт!–
Митя командир хушать,–
Вăхăта, Максимка, виç.
Пирĕн хыççăн, Лев Кузьмич!

Ах анчах, çав самантра
Ян янрарĕ шăнкăрав.
Шăпăрт пулчĕ пĕтĕм класс:
Çӳреве кайма тăхтас.

---

Лев Кузьмич – те илтеймерĕ –
Темшĕн хăлхана чикмерĕ.
Вăл каларĕ:
– Килĕшетеп,
Сирĕн ушкăна кĕретĕп.
Космоса вĕçер халех.
Пурте ларăр меллĕрех! –

... Хӑй задачӑсем валеҫрӗ
Кашнинех ятран ҫырса,
Вӑйӑ йӗркине пӗлтерчӗ
Кирлӗ сӑмахсем тупса.
Кашнин уйрӑм вариант,
Сӑптӑраймӑн никамран.

– Пуҫӑнар,– тет Лев Кузьмич,–
Вӑхӑта, Максимка, виҫ!
Ҫӗкленетпӗр космоса
Урӑхла картлашкапа.

– Карт-ла-шка-па;!
– Космоса;!
Ачасем харӑслатса
Ахӑлтатрӗҫ:
– Ха-ха-ха!
– Ун пек ҫул ҫук уҫлӑха.

Лев Кузьмич – хӑй вырӑнче,
Куҫлӑхӗ – сӑмси ҫинче.
Шӑпӑрт пулчӗ пӗтӗм класс,
Тытрӗ ручка-кӑранташ.

– Пусӑм хыҫҫӑн ҫӗнӗ пусӑм,
Ҫӳлелле ӑс шайӗ куҫтӑр,
Ҫавӑнпа старта тухар –
Ҫак задачӑна шутлар!

Кам пӗлӳ картлашкипе
Хӑпарать ҫӳлтен-ҫӳле,
Ҫавӑн ӗмӗчӗ ҫитет,
Уҫлӑха та ҫӗкленет.

– Тӑваттӑ, виҫҫӗ, иккӗ – старт!–
Экипаж, ӑса туптар!

...Ачасем ӗҫе путаҫҫӗ:
Е ҫыраҫҫӗ, е шутлаҫҫӗ...
Е, ӗнсе хыҫа-хыҫа,
Маччара темскер шыраҫҫӗ,
Кӗтесри мӑн глобуса
Ӗмӗтлӗн куҫ ывӑтаҫҫӗ.
Калӑн пӗтӗм класс ачи –
Уҫӑ космос вӗҫевҫи.

Ӑс-пӗлӳ картлашкипе
Хӑпарсан ҫӳлтен-ҫӳле
Ӗмӗт ҫитессе шанатпӑр –

Космоса уçса тухатпăр.

**Мăлатукпа Пăта**

Юптару

Мăлатук чĕннĕ хăнана
Шĕвĕр Пăтана:
— Ман пата пырсам, хăта,
Кирлĕ ĕç пур, тупата!

— Çук, пымастăп, Пуклак Пуç,
Сансăрах нумай ĕç-пуç, —
Килĕшмен тет шĕвĕрри. —
Шакканинчен мĕн ырри?

— Мăлатук хăпман çапах:
Ан тирке, чыс ту кăштах!
Сансăр пурнăç юхăнать,
Калинкке те тайăлать.

— Пуклак Пуç, час хăп çумран! —
Шĕвĕр Пăта пăхăнман.
— Урăх манăн чăтăм çук! —
Шак шакканă Мăлатук.

Шĕвĕр Пăта шарт! кăна
Кĕрсе ларнă вырăна.
Калинкке тинех юсаннă,
Уçăлмассерен юрланă.

**Пиçиххипе Ырă çын**

—Ăçта-ши ман валли юратнă ĕç?
Чĕн пушă пек манпа сулкалашаççĕ вĕçе-вĕç, —
Куляннă тет Чĕн Пиçиххи. —
Пулас килмест çаптаркăч хăраххи!
Хăшне-пĕрне çара çĕртен пĕçертмелле,
Теприсене кăшт çеç тивертмелле.
Чинпа пысăккине ан хăй тивме.
Итлемесен сĕвеççĕ тирĕме.
Ну, пĕлтĕр-и ăна-кăна...
Мĕнле ĕçпе аппаланма тивет мана.
Эп — урлă-пирлĕ чăпăркка кăна.

Юри сăмах вылятнă Пиçиххи е ӳкĕннĕ чăнах?
Чăн пурнăçра кун пеккине куратпăр час-часах.

Çапла пĕррехинче,
Пĕр ятсăр тăкăрлăк пасарĕнче,
Туяннă Ырă Çын хайхи Пиçиххие.

Пите-куçа тăм илтерен хĕл кунĕнче
Туллатнă кĕрĕк тăхăнса,
Пиçиххие пилĕк тавра шарттин!  яваласа
Çын тухнă тет çула.
Ара, вутта ун каймалла.
Сив çил çапсассăн та упраннă ÿт ăшши...
Тинех ăнланнă Пиçиххи:
Текех вăл урлă-пирлĕ çапкăч мар —
Тату ĕçре ыттисене кăтартĕ пархатар!

* * *
Пĕр лав çине ларсассăн Ыр Çынпа
Ху вырăнна тупатăн пурнăçра.

**Сутăнчăк юлташ**

Пакшапа Арлан
Шĕшкĕлĕхре аван
Пĕрлешсе ĕçле пуçланă иккĕн тан:
Сарă мăйăра пухсассăн пĕр купа
Шухăшсăр хĕл каçĕç тутă хырăмпа.
Ах, таçтан ялт! сикнĕ тухнă Пурăш.
… Ямăта хапсăнакан та пур-иç.

Пакшапа Арлан
Чăтлăха пытаннă тăшманран,
Кÿлĕннĕ ĕçе сас-чÿсĕр, сыхланса,
Тĕрлĕ йĕксĕкрен асăрханса.

Шĕшкĕ тăрринче Пакша
Татнă сарă мăйăра пашка-пашка.
Аялта вара тăрмашнă тет Арлан:
Мăйăр ÿкнĕçемĕн пухнă — ним те çухатман.
Шĕшкĕ айĕнче пĕр мăйăр та юлман.
Тупăш ăçтине çеç никама та каламан.

Ай инкек!
Шыçăннă Арлан çăварĕ чышка пек!
— Тухтăра чĕнесчĕ, — кускаланă ун тавра Пакша.
Ырăскер пăрахмĕ юлташа.

Тухтăр та сиплеймĕ çăткăнлăх чирне,
Пĕтĕм мăйăра Арлан тултарнă çăварне.

* * *
Сутăнчăк юлташ, чăнах,
Тăшманран чылай хăрушăрах.